чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

175/26581/ № Ытлари кун, 2014, авăн (сентябрь), 9 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

«РАÇÇЕЙ – СПОРТ ÇĔР-ШЫВĔ» ФОРУМ

Шупашкар 2014

Çĕнтерӳсемпе сывлăхлисен республики пулнине çирĕплетер

Ватти те, вĕтти те – пурте ирхи зарядкăна!



cap.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕ

Ĕнер Правительство çуртĕнче "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форума тата Раççей Президенчĕ çумĕнчи физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ĕçлекен Канашĕн ларăвне хатĕрленсе ирттерес енĕпе ĕçлекен республикăри йĕркелӳ комитечĕн черетлĕ ларăвĕ иртрĕ. Унта хальхинче тăватă ыйту пăхса тухрĕç.

"Раççей – спорт çĕр-шывĕ" Пĕтĕм тĕнчери спорт форумĕн ĕçлĕ программине тата ăсталăх сехечĕсене Чăваш Енрен хутшăнакан спортпа педагогика общественноçĕ пирки ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников пĕлтерчĕ. Сергей Владимирович каланă тăрăх – спортăн 5 тĕсĕпе ăсталăх сехечĕсем ирттерме палăртнă. "Çăмăл атлетика енĕпе йĕркелекен ăсталăх сехетне Олимп чемпионĕсем те, паллă спортсменсем те хутшăнĕç. Триатлонпа кăсăкланакансем Раççейĕн триатлон енĕпе пĕрлештернĕ командин тренерĕ Дмитрий Гудков ертсе пыракан урокĕсенче хăйсен ăсталăхне ӳстерме пултарĕç. Сĕтелçи тенниса юратакансем вара Çĕнĕ Шупашкарти ачасемпе çамрăксен 3-мĕш спорт шкулне пухăнĕç. Кăтартуллă мероприятие Евгений Леонтьев паллă тренер ертсе пырĕ. Химиксен хулинчи çăмăл атлетика манежĕнче Олег Костюченко тĕп тренер /Мускав/ адаптаци спортĕнчи вăрттăнлăхсене уçĕ. Асăннă хулари ачасемпе çамрăксен 3-мĕш спорт шкулĕнчех хĕрарăмсен хушшинче ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсене тата вĕсен вĕрентекенĕсене Раççейĕн пĕрлештернĕ командин тĕп тренерĕ Юрий Шахмурадов ăсталăх сехетне пухĕ. Самбона кăмăллакансене вара Шупашкарти "Четра" спорт шкулĕ йышăнĕ. Кунти ăсталăх урокĕсене Раис Рахматуллин ертсе пырĕ. Спорт гимнастикипе тата пăр çинче ерешсем туса ярăнакансене РФ тава тивĕçлĕ тренерĕсем Ольга Булгаковăпа Виктор Кудрявцев хăйсем тавра пухĕç. Çакна та палăртмалла: ăсталăх сехетне хутшăнакан кашни çын квалификацине ӳстернине çирĕплетекен свидетельство илĕ. Ăсталăх сехечĕсене пĕтĕмпе çĕр-шыври 400 ытла специалист хутшăнмалла. Çав шутра Чăваш Енрен – 150 тренер. Асăннă мероприятин тĕп тĕллевĕ – ĕçри ăсталăха, меслетлĕхе ӳстересси, спортри çĕнĕлĕхсемпе паллашасси",– уçăмлатрĕ Сергей Владимирович.

✓ ЮПА УЙĂХĔН 9-10-МĔШĔСЕНЧЕ ШУПАШКАРТА "АВТОМОБИЛЬСĔР КУН" АКЦИ ЙĔРКЕЛЕСШĔН. ÇАВ КУНСЕНЧЕ ХУЛАРА ПУРĂНАКАНСЕМ ĔÇЕ ОБЩЕСТВО ТРАНСПОРЧĔПЕ Е ÇУРАН ÇИТМЕ ПУЛТАРĔÇ. ЭПИР ВАРА СПОРТ ФОРУМĔ ИРТНĔ КУНСЕНЧЕ ĔÇЕ ТЕ, УЯВА ТА СПОРТ ТУМĔПЕ КАЙМА СĔНЕТПĔР

Спорт форумĕ иртнĕ кунсенче шурă халатлисем те сыхă тăрĕç, вăхăтра медицина пулăшăвĕ парĕç. Кун пирки ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ЧР сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова пĕлтерчĕ. Алла Владимировна каланă тăрăх – мĕн пур медицина учрежденине çирĕп йĕркепе ĕçлемеллине маларахах пĕлтерĕç, тухтăрсемпе медсестрасем пурте пĕрешкел тумпа – медицина халачĕсемпе – пулĕç. Водительсем вара шурă перчеткесем тăхăнĕç.

Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков спорт форумĕ вăхăтĕнче Пĕтĕм тĕнчери хăвăрт утакансен кунне тата спортсменсен парадне йĕркелесси пирки пĕлтерчĕ. "Форума хатĕрленме эпир тахçанах пуçланă ĕнтĕ. Пирĕн тĕп тĕллев – çак мероприятисене хулара пурăнакансен ытларах пайне хутшăнтарасси. Кашни кун тенĕ пек хулара халĕ зарядкăсем ирттеретпĕр. Шăмат кунпа вырсарни кун тĕрлĕ ăмăрту пулать. Мĕн пур шкулпа ача садĕнчех куна ирхи зарядкăран пуçласшăн. Çитес эрнерен ĕç коллективĕсене те зарядкăна явăçтарма пуçласшăн. Вĕсене ачасенчен пуçласа пенсионерсем таранчченех хутшăнмалла. Юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче тĕп хулари "Энергия" стадионта "Атте, анне тата эпĕ – спорт çемйи" ăмăрту иртĕ.

● ➡ 2 стр.

КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

Журналистсем – сывă пурнăç йĕркишĕн

Ĕнер калем ăстисем Журналистсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлĕх кунне уявларĕç. Çавна май вĕсем Пичет çурчĕ умĕнчи сквера ирхи зарядкăна тухрĕç.

«Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форум çывхарнă май питĕ вырăнлă ку. Çынсене спортпа туслă пулма чĕнекен статьясемпе кăларăмсем хатĕрленисĕр пуçне сывă пурнăç йĕркине пăхăнни пĕлтерĕшлĕ. «Сывлăх – чи пысăк пуянлăх, ăна упрамалла. Хускану туни ӳт-пĕве çирĕплетет, шăм-шака çемçетет. Çавăнпа куна зарядкăран пуçламалла, вăл ĕçлес тухăçлăха ӳстерет», – палăртрĕç сквера пухăннисем.

Зарядкăна хулари «Джус» фитнес клуб пикисем ирттерчĕç. Журналистсемпе пĕрле зарядкăна РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ, тĕнче чемпионки Алина Иванова та тăчĕ. «Эсир хатĕрлекен телерадиокăларăмсем, хаçат-журналта кун çути куракан материалсем кăсăклă. Чăваш Енри кашни пулăм сирĕн чунчĕре витĕр тухать. Илемлĕ те яка чĕлхепе çырнă статьясене кăмăлласа вулатăп, телеочерксемпе радиокăларăмсем те кăмăл-туйăма хумхантараççĕ. Спорт пулăмĕсене те туллин çутатăр. Эсир спортпа туслă пулни вулакансене те хавхалантарĕ. Паянхи пек кашни кун зарядка тума тăрăшăр, çирĕп сывлăхлă пулăр», – терĕ хăна журналистсене уявпа саламланă май.

Андрей МИХАЙЛОВ.

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

Текех чăрмав çук

Авăн уйăхĕн малтанхи икĕ кунĕнче туристсен Шупашкар хули çумĕпе иртекен тăватă пăрахутне тĕп хуламăрăн причалне кĕртменни халăхра шăв-шав çĕклерĕ. Порт дирекцийĕ çакна навигаци тапхăрне шăпах çав кун вĕçлени çинчен пĕлтернипе сăлтавларĕ.

Хăйĕн расписанийĕнче туристсен карапĕсене авăнăн 27-мĕшĕччен йышăнассине çирĕплетнĕ пулин те. Апла тăк юхан шыв порчĕн ĕçченĕсем яваплă ведомствăсемпе 2010 çулта тунă килĕшӳсене вăхăтсăрах пĕр енлĕ татнă. Ку пăтăрмахпа ЧР Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви çийĕнчех кăсăкланнă, республика прокуратурипе УФАСа (Монополипе кĕрешекен службăн Чăваш Енри управленийĕ) çырупа тухнă. Вĕсен тĕрĕслевĕ хыççăн порт дирекцийĕ причалсене уçнă. Халĕ транзит пăрахутсем расписанипе килĕшӳллĕн вĕсене ирĕклĕнех кĕреççĕ.

Пирĕн «пăтăрмахăн сăлтавĕ мĕнре, мĕншĕн çапла килсе тухнă?» Ыйтăва Шупашкар юхан шыв порчĕн тĕп директорĕ Ванифатий Шайкин хуравларĕ:

– Шупашкар кӳлмекĕн акваторийĕнчи 4-мĕшпе 5-мĕш причалсен çывăхĕнчи çыран ăшăхланса пынипе ăна пирĕн васкавлă тасатма тиврĕ. Çак тĕлти шыв тарăнăшĕ 4 метртан иртмелле, палăртнă вырăнта 3 метр е ытларах кăна юлнă. Причала кĕрекен карапсем вĕсем çинче «лакса ларма» пултарнă. Çав вырăнтан эпир икĕ баржăпа 3 пин тонна тасамарлăхпа юшкăн тиесе тухрăмăр...

Тĕп директор шухăшĕпе – ЧР Çут çанталăк тата экологи министерстви юхан шыв портĕнче строительство валли хăйăр хатĕрлемелли лицензие каялла илнине çак пăтăрмахпа çыхăнтарма кирлĕ мар: «Ку ăнсăртран çапла килсе тухни кăна...»

Ю.СТЕПАНОВ.

Медиксем валли – спорт лапамĕ

Шупашкар хулин 1-мĕш клиника больницинче нумай функциллĕ спорт лапамĕ ĕçлеме пуçланă.

Çак пулăма халалласа унта спорт уявĕ иртнĕ. Савăнăçлă мероприятие медицина ĕçченĕсемпе больницăра сипленекенсем, ку тăрăхра пурăнакансемпе спортпа туслă çынсем хутшăннă. Вĕсене ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова саламланă. "Медиксем сывлăхшăн яваплă, çавăнпа вĕсен те сывă пурнăç йĕркине пăхăнмалла", – палăртнă министр. Спорт лапамĕнче кашни хăйне валли кăсăкли тупатех: футболистсем футбол уйне васкĕç, волейболистсем матч хыççăн матч ирттерĕç, хĕлле хоккейла выляма май пулĕ, уçă сывлăшра вырнаçтарнă çĕнĕ тренажерсем те маттуррисемпе хастаррисене йыхравлĕç. Стадион уçăлнă кун арçынсем мини-футбол турнирĕнче вăй виçнĕ, хĕрарăмсем волейбол ăмăртăвĕнче тупăшнă.

А.МИХАЙЛОВ.

"Карчăк ăшши" пурне те кирлĕ!

Çанталăк кăмăлне пĕлеймĕн: паян капла та, ыран темле. Чăваш Республикинчех пĕр кунта тĕрлĕрен вăл. Сăмахран, шăмат кунпа вырсарни кун Вăрнар районĕнче кăнтăрла хыççăн çумăр киле-киле чашлаттарчĕ. Патăрьелсем патне çитеймен вара вăл. Унти çынсем тӳпене хура пĕлĕтсем хупланине çеç курнă.

Воркутара вара акă авăнăн 3-мĕшĕнче юр ӳкнĕ. Çанталăк кĕр енне сулăннăран хĕл те инçех мар. Кĕçех пирĕн тăрăхра та пĕрремĕш юр курăнĕ. Анчах унччен «карчăк ăшшин» илемĕпе киленсе юлас килет-çке. Хăçан çитĕ вăл пирĕн пата? Ĕнер тĕп хулара хĕвел шартарсах пăхрĕ, çил те ăшăрах пек. "Шăпах ĕнтĕ «карчăк ăшши» пуçланчĕ", – терĕç Чăваш гидрометеоцентр ĕçченĕсем. Чăваш Енре ку эрнере çанталăк еплерех пулассипе кăсăкланса специалистсемпе çыхăнтăмăр.

– Чăваш Республикинчи çанталăк пысăк атмосфера пусăмĕн витĕмĕнче. Çитес вăхăтра улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ, çумăрсăр çанталăк тăрать. Эрне вĕçĕнче, шăмат кун, кăшт çумăр çума пултарать. Хăш-пĕр районта ир-каç тĕтре карса илет. Каçхине – 4-10 градус, кăнтăрла 15-21 градус ăшă. Çил кăнтăртан, – пĕлтерчĕ дежурнăй синоптик Галина Ярисова.

В.БАГАДЕРОВА.

Газ çителĕклĕ

Авăн уйăхĕн 6-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев «Шупашкар-3» ГРСран Шупашкар районĕнчи Хыркассинчи пысăк пусăмлă газопровод патне пыракан газопровода савăнăçлă лару-тăрура уçма хутшăннă.

Сăмах илнĕ май Чăваш Ен Пуçлăхĕ газ отраслĕн ĕçченĕсене професси уявĕ ячĕпе саламланă, газификаци енĕпе республика ытти регионпа танлаштарсан ăнăçлă ĕçленине палăртнă. «Юлашки çулсенче «Газпромăн» инвестици программипе килĕшӳллĕн газопроводсем хывма, АГРС-3 строительстви валли 1,3 млрд тенкĕ уйăрнă. Шупашкар хулин центрĕнче газ çителĕксĕрччĕ, кăçалтан унти потребительсене газпа туллин тивĕçтеретпĕр. Бизнес аталанăвĕ валли пĕтĕм услови пулать, мĕншĕн тесен газ дефицичĕ текех пулмĕ», – тенĕ вăл. Михаил Васильевич çулталăк вĕçĕнче Атăл леш енне газификацилемелли проектпа смета документацине экспертизăна парасси çинчен пĕлтернĕ, çавна май кĕçех унта та ĕçлеме пуçлĕç.

«Газпром межрегионгаз Шупашкар» ООО гендиректорĕ Кияметдин Мифтахутдинов пĕлтернĕ тăрăх – ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата «Газпром» АУО правленийĕн председателĕ Алексей Миллер калаçса татăлнипе килĕшӳллĕн республикăна газификацилемелли программа çирĕплетнĕ планпа килĕшӳллĕн пурнăçланать. Ĕнер хута янă 4,3 км тăршшĕ пысăк пусăмлă газопровод вара Шупашкар районĕнчи предприятисемпе çурт-йĕре сенкер топливăпа тивĕçтерме май парĕ.

К.ПЕТРОВ.

Çанталăк çинчен

Паян уяр çанталăк пулать. Çил кăнтăртан 1 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 16, çĕрле 6 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 758 мм, сывлăшри нӳрĕк 47 процент.

Кун тăршшĕ 13 сехет те 15 минут.

Ыран хĕвеллĕ çанталăк пулать. Çил кăнтăртан 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 18, çĕрле 9 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 760 мм, сывлăшри нӳрĕк 50 процент.

Кун тăршшĕ 13 сехет те 11 минут.

Çĕнтерӳсемпе сывлăхлисен республики пулнине çирĕплетер

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Çак кунах Хĕрлĕ тӳремри спорт мероприятийĕсем старт илĕç. Унта тĕрлĕ ăмăрту пулĕ, сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансем ГТО нормативĕсене пурнăçлассишĕн вăй виçĕç. Пĕтĕм тĕнчери хăвăрт утакансен кунне хутшăнакансем те çак кунах старт илĕç. Вĕсем Шупашкар кӳлмекĕ тавра утса вăй виçĕç. Вун тăватă сехетре Хĕрлĕ тӳремре спортсменсен парачĕ пуçланĕ. Уяв вăхăтĕнче аттракционсем тӳлевсĕр ĕçлĕç. Вун пилĕк сехетре вара фейерверк пулĕ", – терĕ Алексей Олегович.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хăйсен çурчĕсенче пурăнакан çынсене паллă спортсменсемпе пĕрле ирхи зарядкăна тухма чĕнсе каларĕ. Шупашкарти 59-мĕш шкулти вĕрентекенсем вара кĕçĕн классенче вĕренекенсем валли йĕркелекен зарядкăпа паллаштарчĕç. Ирхине уроксем пуçланиччен ачасем парта хушшинчен тăрса тĕрлĕ хускану пурнăçлаççĕ. Вĕсем пĕрре те йывăр мар, хаваслă, çĕкленӳллĕ. Тĕп хулари 5-мĕш гимназире вăтам тата аслă классенче вĕренекенсем те çак хăнăхтарусене пурнăçлаççĕ. Вĕрентекенсем сĕннипе çак хăнăхтарусене спорт залĕнче ашшĕ-амăшне те кăтартма пулать. ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов пĕлтернĕ тăрăх – спорт форумĕ иртнĕ кунсенче музейсемпе театрсем урăхларах кун йĕркипе ĕçлĕç. Театрсен репертуарĕсене маларахах хатĕрленĕ. "Раççейре Пĕтĕм тĕнчери хăвăрт утакансен кунне пуçласа ирттереççĕ. Пĕрремĕшĕ пирĕн патра пулĕ. Унта 10000 ытла çын хутшăнасса кĕтетпĕр. Юпа уйăхĕн 9-10-мĕшĕсенче Шупашкарта "Автомобильсĕр кун" акци йĕркелесшĕн. Юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче хулара пурăнакансем ĕçе общество транспортĕпе тата çуран çитме пултарĕç. Юпан 10-мĕшĕнче вара хула çыннисем ытларах велосипедсемпе çӳрĕç. Эпир вара сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансене спорт форумĕ иртнĕ кунсенче ĕçе те, уява та спорт тумĕпе кайма сĕнетпĕр. /Кун пирки эпир маларах "Публицист шухăшĕ" статьяра та çырнăччĕ/. Шупашкар чăннипех çĕнтерӳсемпе çитĕнӳсен тата сывлăхлисен хули пулнине çирĕплетер.

Чăваш Республикинчи Сутуилӳпе промышленноç палатин президенчĕ Игорь Кустарин тĕп хулара "Хальхи спорт. Çĕнĕлĕхсемпе малашлăх" спорт индустринчи çитĕнӳсен куравне йĕркелесе ирттерессипе паллаштарчĕ. Выставка Республика тӳремĕнчи 2-мĕш павильонра уçалĕ. Унта экспонатсемпе паллашнисĕр пуçне тĕрлĕ мероприяти, çав шутра ачасем валли викторинăсемпе вăйăсем те, йĕркелеме палăртаççĕ. ЧР информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министрĕ Валентина Андреева пĕлтернĕ тăрăх – унта кĕнеке куравне те йĕркелеме палăртаççĕ. Экспозицире спортпа çыхăннă литература кăна мар, Чăваш Ен историйĕпе, халăх йăли-йĕркипе тата культурипе паллаштаракан "чун çиměçĕсем" те пулĕç. "Советская Чувашия" хаçат вара вулакансем ярса панă сăн ӳкерчĕксен куравне те йĕркелĕ. Спорт форумĕ тĕлне Чăваш Республикипе тата Шупашкар хулипе паллаштаракан ятарлă буклетсем хатĕрлеççĕ. Ларăва хутшăнакансем "Хальхи спорт. Çĕнĕлĕхсемпе малашлăх" куравра ĕлĕкхи спорт хатĕрĕсемпе паллаштарсан та аван пулĕччĕ терĕç. Сăмахран, çăмат çинчен сырмалли коньки-семпе ярăннă маларах. Паянхи çамрăксем вĕсене курман та пулĕ?

Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Александр Сироткин Хула кунĕ /авăнăн 20-мĕшĕнче паллă тăваççĕ/ футбол уйĕ уçăлассине пĕлтерчĕ. Апла, спорт форумĕ вăхăтĕнче сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансем кунта футболла выляса киленĕç.

■ **Роза ВЛАСОВА**

Йĕркене пăсакансене штраф тӳлеттермелле

Авăнăн 8-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе, федераци влаçĕн территори органĕсен тата хула округĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Строительство министрĕ Олег Марков Федерацин çурт-йĕр строительствин аталанăвне пулăшмалли фончĕпе /РЖС/ çыхăнса ĕçлени çинчен каласа кăтартнă.

Фонд ЧР Министрсен Кабинечĕпе çыхăну йĕркеленĕ май федерацин 76,1 гектарĕ çинчи 9 çĕр лаптăкне çаврăнăша кĕртнĕ. Шупашкар хулинчи 6,3 гектар çинчи çĕр лаптăкĕ çинче пурăнмалли 4 çурта хута янă, хваттерсен пурăнмалли лаптăкĕ 100 пин ытла тăваткал метрпа танлашать. 2011 çулта Çĕрпӳ хулинче 5,2 гектар çинчи лаптăкра 11 коттеджа хута янă.

Чăваш Енре патшалăх пурăнмалли çурт-йĕр политикин тĕп тĕллевĕ – эконом-класс йышши пурăнмалли çурт-йĕр строительствине аталантарса граждансен мĕн пур категорийĕ валли çурт-йĕр тумалли майсене тивĕçтересси. Хальхи вăхăтра Çĕрпӳре 20 гектарпа танлашакан çĕр лаптăкĕпе /"Кăнтăр-2" микрорайон/ ĕçлеççĕ. Унта 2018 çулччен 20 пин тăваткал метр нумай хутлă 10 тата уйрăм çынсен пурăнмалли 16 çуртне хута яма палăртнă, çав шутра эконом-класа кĕрекен çурт-йĕр 50% кая мар. Çак вырăнта пурăнмалли 60 хваттерлĕ çурт тата 16 коттедж туса лартнă. 2014 çулхи раштав уйăхĕнче 60 хваттерлĕ пурăнмалли тата икĕ çурта хута ярасшăн.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата "РЖС" гендиректорĕ Александр Браверманн килĕшсе татăлнипе фонд республикăн Министрсен Кабинетне Шупашкар хулинче Етĕрне çулĕ тăрăх вырнаçнă 16 гектарлă çĕр лаптăкне тытса тăмашкăн полномочисене пама йышăннă. Унта 200 пин тăваткал метртан кая мар пурăнмалли çурт-йĕр тăвĕç.

Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх – çакнашкал йышăнусем кăларнипе пурăнмалли çурт-йĕр рынокĕнче конкурентлă лару-тăру йĕркеленет, тĕрлĕ йышши "ĕçлĕ çынсем" валли çулсем хупăнаççĕ. Вĕсем çĕр лаптăкĕсене строительство валли тесе туянаççĕ, тĕрĕссипе, çĕре тепĕр хут сутса укçа тăваççĕ. Çавна май Чăваш Ен Пуçлăхĕ федерацин хăш-пĕр чиновникĕ ăнланмаллах мар позици йышăннине палăртнă. Вĕсем республика территорийĕнче хăйсен полномочийĕсене пурнăçлаççĕ, çивĕч ыйтусене татса парассине тимлесех каймаççĕ.

Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕ Иван Исаев вăрмансемпе усă курнăшăн тӳлемелли парăмсем, административлă штрафсене шыраса илесси çинче чарăнса тăнă.

Чăваш Республикинче 146,2 пин гектар вăрмансемпе /вăрман фондĕнчи çĕрсен пĕтĕмĕшле лаптăкĕн 24,5%/ усă кураççĕ. Вăрман лаптăкĕсене арендăна илнин 563 килĕшĕвĕ тата ялан усă курмалли 11 ирĕк вăйра. 2014 çулхи 8 уйăхра вăрмансемпе усă курнинчен федераци бюджетне 11,7 млн тенкĕ пырса кĕнĕ, республика бюджетне – 10,4 млн тенкĕ.

Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 17 арендатор тата вăрманпа усă курнă 27 çын федераци бюджетне – 16,4 млн тенкĕ тата республика бюджетне 30,5 млн тенкĕ парăма кĕнĕ.

✓ АВĂН УЙĂХĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ 17 АРЕНДАТОР ТАТА ВĂРМАНПА УСĂ КУРНĂ 27 ÇЫН ФЕДЕРАЦИ БЮДЖЕТНЕ – 16,4 МЛН ТЕНКĔ ТАТА РЕСПУБЛИКА БЮДЖЕТНЕ 30,5 МЛН ТЕНКĔ ПАРĂМА КĔНĔ

ЧР Пуçлăхĕ пĕлтернĕ тăрăх – тӳрĕ кăмăллă мар предпринимательсем явăплăхран пăрăнаççĕ, вĕсенчен парăмсене шыраса илме май та çук темелле. "Чăваш вăрман хуçалăхĕ" патшалăх унитари предприятине панкрута кăларнă, документсене çунтарса янă. Халăх пурлăхне /вăрман – халăх пуянлăхĕ/ вăрлассинчен пăрнă çынсем МИХсенче статьясем саккас парса çыртарса пире пылчăкпа вараласçĕ. Çапах та эпир тӳрĕ кăмăлпа ĕçлĕпĕр, ку тытăмра йĕрке тăвăпăр", – тенĕ Михаил Игнатьев.

Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова сывлăха çирĕплетмелли çуллахи кампани мĕнле иртни çинчен пĕлтернĕ.

2014 çулта сывлăха çирĕплетмелли кампани пуçланнăранпа 85385 ача каннă, сывлăхне çирĕплетнĕ, ку пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен 10,2% пысăкрах. Çав вăхăтрах Чăваш Республикин Ачасен прависем енĕпе ĕçлекен уполномоченнăйĕ Вячеслав Рафинов каланă тăрăх – Çĕрпӳ тата Улатăр районĕсенчи лагерьсенче пĕрремĕш сменăра канмалли 200 путевкăпа усă курман. Ашшĕ-амăшĕ çак путевкăсене илме килĕшмен е вĕсене каярах сменăсем валли уйăракан путевкăсемпе улăштарнă.

Ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов уй-хирти ĕçсем мĕнле пыни, районсем кĕрхи культурăсем акмалли плана еплерех тултарни, ял хуçалăх продукцийĕ сутмалли ярмăрккасем ирттерни çинчен каласа панă.

Авăн уйăхĕн 8-мĕшĕ тĕлне республикăра пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене лаптăксен 85,7% çинчен пухса кĕртнĕ. Елчĕк районĕ тырра пухса пĕтернĕ, Шăмăршă, Патăрьел тата Комсомольски районĕсем те ĕçе вĕçлесе пыраççĕ. 493 пин тонна тырă çапса тĕшĕленĕ, гектрăн вăтам тухăçĕ 21,9 центнерпа танлашать /иртнĕ çулта – 401,9 пин тонна тата гектартан 18,2 центнер/. Çĕр улмине 885 гектар çинчен пухса кĕртнĕ.

Хуласен администрацийĕсен оперативлă кăтартăвĕсем тăрăх çурла уйăхĕн 23-31-мĕшĕсенче республикăн хула округĕсенчи ярмăрккасенче 59,8 тонна çĕр улми тата пахча çиměç /784,4 пин тенкĕлĕх/ сутнă. Пенсионерсене, ветерансемпе инвалидсене туяннă ял хуçалăх продукцине тӳлевсĕр илсе пырса парассине йĕркеленĕ.

Юлашкинчен Чăваш Ен Пуçлăхĕ хăй регионăн автомобиль çулĕсем çинче пысăк груз турттаракан транспорт валли виçе тăрăх чикĕсем лартма хушни çинчен аса илтернĕ. "Иртнĕ эрнере Етĕрнере пултăм. Пĕр паллă та лартман, пысăк тиевлĕ машинăсем мĕнле çӳренĕ – çаплипех çӳреççĕ, çулсене мĕнле çĕмĕрнĕ – çаплипех çĕмĕреççĕ. Пирĕн йĕркене пăсакансене штраф тӳлеттермелле, çак укçа-тенкĕпе çулсене юсамалла", – сăмахне пĕтĕмлетнĕ Михаил Игнатьев.

Республика Пуçлăхĕ финансистсене професси уявĕпе саламланă.

■ **А.ЛЬВОВА**

Ял-йыш уявра савăнчĕ

● *Ял хастарĕ М.Матвеев тата "Паха тĕрĕ" фабрикăра чылай çул ĕçленĕ, икĕ орден кавалерĕ З.Семенова.*

Тăван тăрăхăмăр историне тишкерсессĕн, унăн "тымарĕ" 18-мĕш ĕмĕртен аталанма пуçланнине куратăн. Çавăн чухне кунта чăтлăх вăрман кашланă. Çĕр улпучĕсен асапне чăтаймасăр çĕр хресченĕ унта хӳтлĕх шыранă. Çавăн пеккисенчен пĕри çурт лартнă. Каярахпа ыттисем майĕпен куçса килсе тĕпленнĕ. Малтанлăха ăна Вонпӳкасси теме тытăннă. "Вон пӳ" сăмах вунă община ертӳçи тенине пĕлтерет. Ун чухне ял шăпах çавăн чухлĕ пайран тăнă: Вачалкасси, Пайтирек, Вăрманкас, Опиккасси, Уйкас, Хĕрлĕ çыр, Аначкасси, Алькеш, Çырмапуç, Чăрăшкасси. 200 çул каялла Алькешре пĕтĕмпе те 20 хуçалăх шутланнă, халĕ – 100 ытла. Яла шурлăх икĕ урама уйăрнă. Урамăн пĕр вĕçĕнче чиркӳ вырнаçнă.

Алькеш ялĕ хăйĕн мухтавлă ывăлĕ-хĕрĕпе чăннипех мухтанма пултарать. Сăмахран, кунта Николай Айзман писатель-драматург, артист тата режиссер çуралнă, чăваш тĕррин "Паха тĕрĕ" артелĕ ĕçленĕ. Унăн ĕçĕсене Европăри, Азири, Америкăри 67 çĕршывра кăтартнă.

Алькеш ялĕн историйĕ çулсерен пуянланса пынă. Паян тăван тăрăхĕн сумне РСФСР тава тивĕçлĕ строителĕ Людмила Васильева, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ, Шупашкар районĕн хисеплĕ гражданинĕ Петр Владимиров, Чăваш Республикин Патшалăх премийĕн лауреачĕ, истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ Валентина Харитонова тата ыттисем çĕклеççĕ.

Ял хастарĕсен пуçарулăхĕпе Алькеш хальтерех хăнасене кĕрекене пухнă. Аякрисем те çула кĕскетсе çуралнă кĕтесе çитнĕ. Ял историйĕнче палăрнисене, унăн шăпишĕн тăрăшакан хастарсене, ят-сум çĕнсе илнисене чысланă. Вĕсене сцена ăстисем юрă-кĕвĕпе хавхалантарнă.

■ **Михаил МАТВЕЕВ**

● *"Çĕньял" фольклор ансамблĕн юрри-кĕввине кашниех хапăл.*

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

Айдак еткерĕ – тăван халăхăмăр валли



Ырă ячĕ пĕтĕм çĕр-шывĕпе сарăлнă Аркадий Айдака асăнса лартнă палăка уçма хутшăнакансенчен пĕри пултăм. Митингра сăмах калакансене итлеципе пĕрлех Аркадий Павловичпа тĕл пулса калаçнине аса илтĕм. Пурнăçĕ татăличчен темиçе уйăх малтан унран илнĕ интервью «Хыпарта» кун çути курчĕ. Хисеплĕ ветерана хамăн сĕтел хушшине лартса фотоаппаратпа ӳкерсе илтĕм. Çырма-çатра çулне пӳлес тĕлĕшпе «Ленинская искра» колхозра вун-вун çул пурнăçланă ĕçĕсем çинчен каласрăмăр. Ертӳçĕсем вĕсене лайăх пĕлеççĕ. Апла пулин те Айдак опытне аса илсех тăрар.

«Мана колхоз председателĕн тилхепине тыттарсан ял хĕррине çуракан çырмасем пăшăрхантарма пуçларĕç, – аса илчĕ вăл. – Сăмахран, пĕри Мăн Шемертен ялĕн пуçнех çитнĕччĕ. Кунтан райцентра каймалли çул иртетчĕ. Кĕрленкĕ ишĕлсе ăна татса кайма тепĕр вăйлă çумăр кăна кирлĕччĕ. Шырлана мĕнле чармалла? Хăвăртрах киле кайрăм та сарăхса кайнă «Полеводство» ятлă кĕнекене шыраса тупрăм. Ăна 1942 çултах пичетлесе кăларнă. Çырма тĕпне шалça ярса çатан тытма вĕрентнĕ страницăна уçрăм. Çакăнтан пуçланчĕ манăн çурхи-кĕрхи шыв çĕре сиен кӳнипе кĕрешесси».

Алексей Артемьев ертсе пынă бригада тепĕр куннех ĕçе пикеннĕ: Мăн Шемертене хăрушлăха кĕртнĕ çырма тăршшĕпех шыв юхкине урлă икшер ретĕн çатан тытнă, хушшине çатрака, хăмлапа çĕр улми, апата юрăхсăр люцерна аври тултарнă. Колхоз председателĕ çумăр ярсанах темиçе кун каялла çеç ăсталанă тăпра тытса юлмалли хатĕр-хĕтĕре пахалама вĕçтернĕ. Палкаса юхакан шыв самантлăша тенĕ пек кашни пĕвеленчĕкрех пуçтарăннă, çапах нумай тытăнса тăман, кивĕ улăм тултарнă çатан витĕр хăвăрт сăрханнă.

Çумăр чарăнсан çырмана анса пăхаççĕ те хайхи хатĕрсем колхоз уйĕнчен анакан тăпрана тытса юлнине асăрхаççĕ. Аркадий Павлович правлени ларăвĕнче савăннипе хавхаланса каласнă. Ĕçе тăсма темиçе бригада йĕркеленĕ.

Çапла пуçланнă «Ленинская искрăра» ял çыннисен тĕп тăшманĕпе кĕрешесси. Каярахпа Тури Ачакран Шупашкара çитиччен тăсăлакан çул тăршшĕпе танлашакан мĕн пур çырма-çатрана çĕр-çĕр шалça яраççĕ, çатан икшер ретĕн вырнаçтарса хушшине каяш тултараççĕ. Сыпăкĕсене тăпра тулсан конструкцие çырма тăршшĕпех иккĕмĕш-виççĕмĕш хут майлаштараççĕ. Тĕпне ларни хулăнлансах пынă.

Хальхи вăхăтра Айдакăн çак меслечĕпе хăш хуçалăхра усă кураççĕ-ши? Çакна кам калать? Хуравăрпа «Хыпар» вулаканĕсене паллаштарăпăр. Тен, Аркадий Павлович çулĕпе кайса эсир те паха опыт пухнă.

«Ял тăрăхĕнчи тăпрана çырмара тытса хăварни çеç çителĕксĕр, – тетчĕ Айдак. – Ăна хытармалла, курăклатмалла, тымарлантармалла. Унсăрăн вăл, йăшăкскер, çумăр шывĕпе тепрехинчех юхса каять».

Часах вăл пысăк тепĕр ĕç пуçлать. Ăпăртапăр тултарнă çатанлă çырма-çатрана йывăç-тĕм ларттарать: тĕпне – пин-пин хăва, çыран хĕррине, хысака, вашмăклăха, ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен айлăмтайлăмне – йăмра, чăрăш, çăка, ытти культура. Ку ĕçе пурнăçлама колхозниксене, шкул ачисене явăçтарнă. Мăн Шемертен ял тăрăхĕнчи варак-васана тахçанах йывăççем хупăрланă, вĕсем çырана тымарлантарнă. Уй-хир таврашĕнче вăрман тăрăхĕсем ӳссе çитĕннĕ. Çырмана ишĕлме памаççĕ. Пурĕ 300 гектар ытла. Юр тытаççĕ, тăпрари нӳрĕке сыхлаççĕ.

Айдак уй-хирте те тăпра тытса юлмалли конструкци тутарнине аса илер. Анан айлăмри хĕррине тăршшĕн экскаваторпа чавтарса тухнă /траншея газ пăрăхĕ хывма çĕре алтнине аса илтернĕ/. Унта çын, вылăх анса ан кайтăр тесе ӳсен-тăран каяшĕ тултарнă. Тӳпемрен юхса анакан тăпра çакăнта тулнă. Шыв инкекĕпе кĕрешмелли ку меслет те хальхи вăхăтра чухах.

Каярахпа республикăри нумай хуçалăхра Айдакăн çак тĕслĕхĕпе усă курнă: йывăçтĕм лартса çырма çулне пӳлнĕ, çырана тымарлантарнă. Анчах юлашки çулсенче паха опыт сарăлнине асăрхамастăп. Пĕрисем ăна ĕçе кĕртме укçа çук, теприсем унтан пĕлтерĕшлĕрех тĕллевсене пурнăçлатпăр теççĕ. Урлă выртана тăрăх çавăрса хурас килмесен темле сăлтав та тупма пулать. Уй-хир таврашĕнчи вар-варака ешĕллентересси, йывăçлантарасси – хальхи вăхăтра та питĕ кирлĕ ĕç.

Айдак пирĕнтен уйрăлса кайиччен пĕр çул малтан «республикăри çанталăка этем пысăк витĕм кӳме пултарать» терĕ. Мĕнле? Кашни ял тăрăхĕнчи пĕвесене тасаттарса çĕнетмелле, вĕсен шутне темиçе хут ӳстермелле. «Ленинская искрăра» çеç вĕсем 60 ытла. Пур ял тăрăхĕнче те çавăн чухлĕ тусан çуркунне-çулла шыв нумай хут ытларах пăсланĕ, сывлăша ытларах нӳрлетĕ. Пĕвесем çийĕн ирĕн-каçăн тĕтре йăсăрланĕ. Кун пек чух сывлăш температури шăрăхра та пĕчĕкрех пулĕ. Айдак ялĕсенче пĕве йышлăран çĕр айĕнчи шыв шайĕ хăпарнă. Айлăмра вăл таврана сăрханнă. Унăн витĕмĕпе улăх-çаранри курăк çеç мар, ял хуçалăх культурисем те лайăх çитĕнеççĕ.

Пĕвесен тĕрлĕ енлĕ уссине вулакан лайăх пĕлет. Кун пирки сăмах вакламăп. Айдак вĕсене колхоз укçипе те, мелиораторсене те тутарнă. Юлашки çулсенче çак ĕç республикăра кирлĕ пек пымасть. Сăлтавĕ – ял тăрăхĕсен хыснинче укçа çитменнинче. Чăн та, хальхи вăхăтра вĕсен умĕнче ĕç пайтах. Пĕвесем тума республика хыснинчен укçа уйăрмасан ыйтăва татса параймăпăр.

Айдак ял тăрăхĕнче вăрман, уй-хир, шыв-шур чĕр чунне ĕрчетсе, вырăнта чăваш культурине вăйлатса туризма аталантарчĕ. Унта курма хамăр çĕр-шывран кăна мар, чикĕ леш енчен те килеççĕ. Пĕлтĕр чăваш хресченĕн кил-çуртне тĕпрен çĕнетнĕ. Халĕ унта инçетри туристсене кĕтсе илсе укçа ĕçлесе илме пулать.

Пĕтĕмлетсе çапла калас килет: Айдак ертсе пынипе туса хăварнă производство, социаллă пурнăç, культура, вĕренӳ çурт-йĕрĕ, вăрман тăрăхĕ, пĕвесем паян та – ĕçре. Унран юлнă пуян пĕлӳпе анлăн усă курасчĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

Пысăк пулăма эсир мĕнле хаклатăр?

Петр ИВАНТАЕВ, ЧР Министрсен Кабинечĕн председателĕн пĕрремĕш çумĕ, ял хуçалăх министрĕ пулнăскер:

– Палăк уçма эпĕ те кайрăм. Пĕркеве сирсенех митинга пуçтарăннисен умне Аркадий Павлович сăнне аса илтерекен скульптура яр уççăн тухрĕ. Ӳнерçĕ ăна ăста калăпланă. Айдакăн мухтавлă та чаплă ячĕ çавнашкал палăка чăннипех те тивĕçлĕ. Мĕншĕн тесен вăл хуçалăха малтисен ретне кăларнă, колхозниксен пурнăçне лайăхлатнă, ачасене лайăх пăхса çитĕнтерме май тунă, тавралăха ешĕллентернĕ, район, республика, çĕр-шыв шайĕнче агропромышленноç ыйтăвĕсене татса пама хастар хутшăннă, çĕр ĕç культурине пысăк тӳпе хывнă...

Аркадий Павловичпа тĕл пулмассерен каласса ларнине аса илсе палăк çине пăхса тăтăм та шухăша кайрăм. Скульптура хыçĕнче – «Ленинская искра» правленийĕ. Колхозăн паянхи ĕçченĕсене Айдак «ялавне» çирĕп тытса, пасар экономики кăларса тăратнă йывăрлăхсене сирсе малалла талпăнма, çитĕнӳсем тума ырă сунатăп. Çак тĕллев пурнăçланнине пĕлсе пурте савăнĕç, колхоз тилхепине Аркадий Павлович пекех çирĕп тытаççĕ тесе ертӳçисене мухтĕç. Хуçалăх сулмаклăн аталаннине, ял çыннисене ĕçпе тивĕçтернине, кашни çемьене аван тупăш кӳнине курсан çӳлти патшалăхран пирĕн çине пăхса тăракан Айдак чунĕ те хĕпĕртĕ.

Александр КУШКОВ, ЧР ял хуçалăх министрĕ пулнăскер:

– Эпĕ ял хуçалăх министерствине ертсе пынă çулсенче Айдакпа АПК ыйтăвĕсене нумай сӳтсе явнă. Сăмах тапратиччен вĕсене тарăннăн тĕпчетчĕ, хăйĕн шухăшне цифрăсемпе çирĕплететчĕ. Министерство унăн чылай сĕнĕвне йышăннине ас тăватăп.

Хальхи вăхăтра нумай чухне аграрисен пухăвĕ-канашлăвĕ мĕн пур харпăрлăхлă хуçалăхсен ертӳçисем сăмах каламасăрах, ĕçе лайăхлатас тĕллевпе сĕнӳсем памасăрах иртет. Пирĕн вăхăтра ун пек пулман. Министерство усăллине хапăл тусах йышăннă. Аркадий Павлович йывăр ыйтусене татса пама пулăшассишĕн час-часах сăмах калатчĕ. Унпа хутшăннă çулсене аса илсе ларатăп та – чунра ăшă. Палăк лартма укçа хывнисене пурне те тав тăвас килет.

Василий ШАДРИКОВ, ял хуçалăх министрĕн çумĕ пулнăскер, ЧР АПК ветеранĕсен пĕрлĕхĕн ертӳçи:

– Влаçпа халăх пĕрле пулса бронзăран Айдак скульптурине калăплаттарчĕç. Пурнăçа лайăхлатассишĕн пĕтĕм вăйне парса нумай çул ĕçленĕскере çапла хисеплени лайăх. Патшалăхăн хăш-пĕр деятелĕн кĕлеткине ахаль çынсен сĕнĕвне шута илсе мар, влаç пуçару тунипе палăка хываççĕ. Анчах ăна халăх йышăнмасть. Айдак сăнарне скульптура меслечĕпе вилĕмсĕрлетнине пĕр шухăшлăн ырларĕç.

Министр çумĕнче пĕр хушă вăй хунă хыççăн мана партин Елчĕк райкомне ертсе пыма шанчĕç. Малтанхи уйăхрах «Ленинская искра» хуçалăхăн ĕç опычĕпе паллашрăм. Аркадий Павлович уй-хиртен юхса анакан тăпрана ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ лаптăк хĕррипе тăршшĕн канав чавса тытса хăвармаллине, çыран ишĕлесрен çырма-çатрана йывăç лартса тымарлантармаллине, пĕве пĕвелесе шыв шайне хăпартмаллине вĕрентрĕ. Айдак меслечĕпе малтан – Ленин ячĕллĕ, «Слава», «Смычка» колхозсенче, каярахпа ытти хуçалăхра тухăçлă усă курчĕç.

■ **Михаил СЕРЕГИН калаçнă**

Çемье

Ятарлă кăларăм

ТИШКЕРЎ

Çуралакан ытларах

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев юратупа пурăнма сунать

Журналист тивĕçĕпе тăтăшах çул çўреме тивет. Тĕрлĕ ыйтупа тĕрлĕ çын хушшинче пулатăн. Массăллă мероприятие хутшăнма тўр килчĕ тĕк влаç органĕсенче ĕçлекенсен сăмахне итлемесĕр таврăнмастăнах. Сăмахран, Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев халăхпа мĕн çинчен калаçнине хăлха хĕррипе епле ирттерсе ярăн? Çакна асăрхатăп: республика аталанăвĕшĕн пĕлтерĕшлĕ темăсене палăртнă май çемье институчĕ, демографи лару-тăрăвĕ çинчен сăмах хускататех. Патшалăх тĕрекĕ чăннипех çемьери тăнăçлăхран пуçланнине çирĕплетнĕ май пурне те юратупа пурăнма сунать. Çамрăксен, студентсен ушкăнĕпе иртекен тĕл пулусенче уйрăмах вырăнлă унăн ĕнентерўллĕ калаçăвĕ.

Студентсен аудиторийĕнче кăна-и, Раççей Президенчĕпе Владимир Путинпа çурла уйăхĕнче куçа-куçăн тĕл пулнă чухне те Михаил Игнатьев çемьепе тўрремĕн çыхăннă ыйтусенчен пăрăнмарĕ. "Республикăра пурăнакансен социаллă тăрăмĕ лайăхланать. Юлашки 20 çула илес тĕк 2012 çулта тинех демографи лару-тăрăвĕ ырă енне улшăнма тытăннăран çапла калатăп. 2013 çулта халăх шучĕн чăн ўсĕмĕ 1027 çынпа танлашрĕ, çакнашкал ўкерчĕк паян та тытăнса тăрать-ха. Йышлă çемьери ачасен шучĕ юлашки икĕ çулта 11 процент таран ўсрĕ, урăхла каласан çемьесенче виççĕмĕш, тăваттăмĕш ачасем ытларах çуралаççĕ", – республикăри лару-тăрăва уçăмлатрĕ Михаил Васильевич.

Чăннипе паянхи кун тĕлне еплерех-ха Чăваш Ен демографи картти? Вулаканăн çакăн çинчен тĕплĕнрех пĕлес килнине чухланăран хăш-пĕр цифрăпа, фактпа паллашар-ха.

Кăçалхи сакăр уйăхра республикăра 10138 ача çуралнă, вилекенсен шучĕ – 9708. **Эппин, çут тĕнчене килекенсен йышĕ пысăкрах пуласси сыхланса юлать: çак тапхăрта 430 çын хушăннă.** Пуринчен ытла – Шупашкар хулинче. Çĕнĕ Шупашкарпа Канаш хулинче те çак йўтĕм вăçертмерĕ, улшăну пурриçуккине тĕпчесех тăчĕ. Акă куратпăр: пăр тапраннă иккен.

Демографи тĕлĕшĕнчен мĕншĕн çакăн пек лару-тăру йĕркеленнине тĕпченĕ экспертсем çапла палăртаççĕ: **тĕп сăлтав – çамрăксем ялтан хуланалла талпăнни.** Вилĕм сăлтавĕсем малтанхиллех – юн çаврăнăш тытăмĕн чирчĕрĕ /33,8 процент/, ăнсăртран сиксе тухнă инкек-синкек /13,6 процент/, усал шыçă /11,8 процент/, сывлав органĕсен /7,5 процент/, вар-хырăм /6,1 процент/ чир-чĕрĕ. Пĕтĕмĕшле илсен кăçалхи çичĕ уйăхра вилнисен шучĕ пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен уйрăлса тăмасть теме те юрать. Шел, "тулаш" сăлтавсене пула пурнăçран кайнисен шучĕ ўснĕ. Сăмахран, çул-йĕр çинчи инкек-синкекре асăннă тапхăрта 145 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă /пĕлтĕр – 124/.

Статистика çакна та çирĕплетет: **Чăваш Республикинчи хуласенче ку яхăнта çуралнă пепкесен йышĕнче çемьери иккĕмĕш е ун хыççăнхи ачасем "пирвайхи кайăксенчен" йышлăрах.** Çакă мĕн çинчен калать-ха? Эппин, хулара пурăнакансемшĕн хальхи вăхăтра çемьери пĕрремĕш мар, черетлĕ ачана çут тĕнче парнелес шухăш патне çитме çăмăлрах.

Мăшăрланакансем е расна пурăнасси çинчен хут уйăрттаракансем çинчен мĕн каламалла? 1000 çын пуçне шута илес тĕк кăçалхи çичĕ уйăхра Мендельсон маршĕ ялта пурăнакансемшĕн хуларисенчен ытларах янăранă. Апла пулин те уйрăлакансен йышĕ 1000 çын пуçне – хуласенче пысăкрах. **Пуринчен ытла Патăрьелсемпе Елчĕксем савăнтараççĕ: çак районсенче мăшăрланакансен йышĕ уйрăлакансенчен чылай пысăкрах!**

...Аслисене, ваттисене сума сăвакан, вĕсен пилне асра тытса, йăла-йĕркине пăхăнса пурăнакан хăйĕн çемйине упрассишĕн çине тăратех. Çак шухăша хам ăсласа каламастăп, анчах вăл чăнлăхпа пĕр килни пирки иккĕленместĕп. Патăрьел, Елчĕк тăрăхĕнчи ентешсем наци генофондне сыхă упракансем тетпĕр. Асăрхарăр ĕнтĕ, статистика та çакнах çирĕплетет. Çемье саланмасан чи малтанах унра тĕвĕленекен хаклăхсем те /тăван халăха, çĕр-шыва юратасси те çав шутрах/ çухалмĕç. Акă мĕнре çирĕп кил-йышăн тĕшши.

■ **Ирина ПУШКИНА**

✓ КĂÇАЛХИ САКĂР УЙĂХРА РЕСПУБЛИКĂРА 10138 АЧА ÇУРАЛНĂ, ВИЛЕКЕНСЕН ШУЧĔ – 9708. ЭППИН, ÇУТ ТĔНЧЕНЕ КИЛЕКЕНСЕН ЙЫШĔ ПЫСĂКРАХ ПУЛАССИ СЫХЛАНСА ЮЛАТЬ: ÇАК ТАПХĂРТА 430 ÇЫН ХУШĂННĂ

Ольга Гребенюк:

Чунпа эпĕ Украинăрах

Килĕ-çурчĕ хальлĕхе тĕрĕс-тĕкелех

Канаш районĕнчи Тури Юнтапа хĕрĕ Ольга Семеновна Иванова /халĕ Гребенюк/, Украина каччипе пĕрлешсе 27 çул Донецк облаçĕнче пурăннăскер, кăçалхи çу уйăхĕн вĕçĕнче пĕтĕм çемйипе тăван ялне таврăнчĕ. Çиччĕн вĕсем: Ольга Семеновнăпа упăшки Олег Александрович, хĕрĕсем Катьăпа Женя, кĕрўшĕсем Олегпа Денис, пилĕк çулти мăнукĕ Оля. Вăтăр çула яхăн пуçтарнă тупрана, кил-çуртне пăрахса, çийĕнчи тумтирпе кăна инçе çула тухса килет Гребенюксен çемйи.

– Ольга Семеновна, мĕнле паллашнă эсир Олегпа?

– 1986 çулхи кĕркунне пирĕн колхоза çĕр улми кăларма салтаксем килнĕччĕ. Çавăн чухне паллашрăмăр, пĕр-пĕрне килĕштертĕмĕр пулас. Çур çул çыру çўретрĕмĕр, хĕсмет вăхăчĕ вĕçленсен вăл мана Украинăна – Донецк облаçĕнчи Дзержинск хулине кĕрекен Нелеповка поселокне – илсе кайрĕ. Унта Олегăн ашшĕ-амăшĕн пулнă çуртĕнче пурăнтăмăр. Совет влаçĕ арканиччен пурнăç лайăхчĕ, 1991 çултан самана, пур çĕрти пекех, улшăнчĕ.

Кăçалхи ака уйăхĕнче вăрçă пуçланчĕ. Малтан пирĕнтен 100 çухрăмри Славянск хули çине бомба пăрахма пуçларĕç. Утă уйăхĕнче хулана тапăнчĕç. Вăрçă пирĕн пата çитессе пĕлнĕ пекех эпир пĕр уйăх малтан Чăваш Ене тухса килтĕмĕр. Унта упăшкан пиччĕшĕ юлнă та – пĕтĕм хыпара пĕлтерсе тăрать. Дзержинск хулин вырăнти влаç çуртне бомба пăрахса пĕтĕмпех çунтарса янă. Икĕ шкула, пурăнмалли нумай хутлă çуртсене ишнĕ. Телевизор пăхатпăр: Украина çарĕсем пирĕнтен 8 çухрăмри Горловкăна тупăсенчен, минометсенчен персе ишеççĕ. Килтен пĕр 300 метрта ополченецсен блокпосчĕ вырнаçнăччĕ, халĕ унта наци гвардийĕн салтакĕсем тăраççĕ тет.

– Упăшкăрăн пиччĕшĕ унта юлнă терĕр, сирĕн хуçалăх тĕрĕс-тĕкелехи, е?..

– Тав турра, кил-çурт йĕркеллех ларать терĕ.

– Ольга Семеновна, сирĕн кўршĕсем те кил-çуртне пăрахса тухса кайрĕç-и е унтах юлчĕç-и?

– Пурте ăçта кайччăр? Юрать-ха, пирĕн кунта тăвансем пур, малтан вĕсем патĕнче Тури Юнтапара пĕр уйăх пурăнтăмăр, халĕ Канашра уйăхне 7 пин тенкĕ тўлесе хваттер тара тытса пурăнатпăр.

Унта ĕç çук. Шахтăсене йăлтах хупнă. Электричество подстанцийĕсене ишсе пĕтернĕ пирки шахтăна анаймастăн, ансан та хăпараймастăн. Эпĕ библиотекăра ĕçленĕ, упăшка - юнашар поселокри фенол, нафталин, ытти хими препарачĕсем кăларакан заводра. Горловкăра та – хими завочĕ, унта бомба е снаряд лекес пулсан наркăмăш мĕнле сиен кўрессе калама та йывăр. Кĕрĕвĕмсем: Денис – шахтер, Олег – строитель.

– Пилĕк çулти Оля садике çўренĕ пулĕ-ха?

– Шыв пыракан канала çĕмĕрсе пĕтернĕ пирки садике эпир кунта тухса киличченех хупрĕç.

– Çĕнĕ çĕрте пурăнма мĕнлерех?

– Йывăр, паллах, анчах майĕпен хăнăхса пыратпăр. Çынсем питĕ ырă кăмăллă, май килнĕ таран пулăшма тăрăшаççĕ. Çак кунсенче Шупашкартан вăхăтлăх хўтлĕх панине ĕнентерекен хут илсе килтĕмĕр, унтан "беженец" статусне илĕпĕр. "Раççей гражданинĕ пекех ĕçе вырнаçма пултаратăр", - терĕç пире документсем панă чухне. Çулталăкран, тен, Украинăра лару-тăру улшăнĕ, хамăр киле те таврăнма май килĕ. Тĕрĕссипе, çамрăксене кунта килĕшет: лере ĕç тупма питĕ йывăр. Хамăра илес тĕк – паян тесен паян киле кайма хатĕр, анчах пульăпа снаряд айне мĕнле пырса кĕрĕн.

– Ĕçсĕр лармастăр пулĕ?

– Пĕрисене виçĕ пўлĕмлĕ хваттер юсаса паратпăр, çавăн пек вак-тĕвек ĕçсем тупкалатпăр хальлĕхе. Кĕрўсем кунта йĕркеллĕ ĕç тупаймасан Мускава вахтăна кайма шухăшлаççĕ.

Пире Кармами ялĕнче пурăнма пўрт те сĕнеççĕ. Хуçи хăй Мускавра пурăнать, килне хушăран кăна килкелесе каяканскер: "Пурăнăр кунта, çутăпа газ укçи анчах тўлесе тăрăр, урăх сирĕнтен нимĕн те кирлĕ мар", – тенĕччĕ. Чул çурт, унта çутă, газ кĕртнĕ, шыв – картишĕнче, хуçалăхра мĕн кирлĕ – пурте пур: мунча, сарай, пахча... Выльăх усрама та пулать. Ялта садик пур. Пурăнма куçсан мăнукăма унта çўретĕпĕр.

– Пурнăç лайăхланса кайĕ-ха, вăрçă та чарăнĕ...

– Питĕ нумай çын вилет, хăрушă. Хамăрăн поселокран та ополчение нумайăн кайнă, вĕсем хамăртан инçе мар блок-постра тăратчĕç. Поселока наци гвардийĕ кĕнĕ хыççăн кам – Горловкăна, кам Донецка куçнă. Вĕсен пўрчĕсене салтаксем çĕмĕрсе пĕтернĕ, машинисене илсе тухса кайнă. Урамсем тăрăх список тытса тĕрĕслесе çўреççĕ-мĕн.

Украинăн тухăç регионĕсенче пурăнакансен хĕвел анăç тăрăхĕнче тăванĕсем пур. Вĕсем пĕр-пĕриншĕн тăшман пулса тăчĕç: каласмаççĕ, çыхăну тытмаççĕ. Çакăншăн пĕтĕмпех влаçра лараканнсем айăплă.

Ольга Семеновнăпа эпĕ çеç мар, вулакан та килĕшетех: кирек мĕнле вăрçăра та ахаль çын нуша тўсет.

■ **В.ЛАПИН**
каласнă

Вĕсем пуррипе вучах хĕмленет

Чăваш Енре Культура çулталăкĕ

Кашни районтах ыттисенчен мĕнпе те пулин палăрса тăракан ялсем пур. Куславкка районĕнчи хамăрăн Кунер ялĕ мĕнпе мухтанма пултарать-ши тесе шухăшласан тўрех культура çурчĕ пуçа килчĕ. Совет самани вĕçленичченех хăтласа лартнăскер паян кĕрлесе кăна тăрать тесен те тĕрĕсех. 2014 çула Культура çулталăкĕ тесе йышăннăран кунта ĕçлекенсем кăçал пушшех пуçаруллă пулни сисĕнет. Календарьти кашни праçник ячĕпех концерт йĕркелеççĕ. Шупашкартан килнĕ артистсене те ку яхăнта час-часах курма май килчĕ. Республикăн тĕп хулине хуçалăхри ĕçсенчен хăпайманран йăпăр-япăрах çитейместпĕр те – хамăр пата килнĕ хăнасене итлеме-курма ерçў тупатпăрах.

Ялта культура вучахĕ сўнменни унăн аталанăвĕшĕн çав тери пĕлтерĕшлĕ. Çакна ăнланса вучаха хĕмлентерессине хăйсен тивĕçĕ пек йышăнаççĕ вырăнти клуб ĕçченĕсем. Любовь Алексеевнăпа Борис Яковлевич Федоровсем тăрăшнипе Кунерте виçĕ çул каялла "Сударушка" пултарулăх ушкăнĕ йĕркеленчĕ. Паян унăн йышĕнче – юрра-ташша хапăл тăвакан 12 çын. Чылайăшĕ тивĕçлĕ канура. Акă Анна Львовăпа Ника Родионова 70-тен те иртнĕ. Пушă вăхăтра чун киленĕçĕ кунта тупнăшăн хĕпĕртеççĕ кăна вĕсем.

Ушкăнăн юрри-ташшине кирек хăçан та ял-йыш хапăлласа йышăнать. Вăл кăна та мар: "Сударушка" хăйĕн пултарулăхĕпе кўршĕ районсене тухса çўрет, Тутарстанăн хăш-пĕр хутлăхне те çитсе курчĕ. "Татах килĕр, хаваспах кĕтсе илĕпĕр!" – тăтăшах çак сăмахсемпе ăсатаççĕ вĕсене тĕрлĕ кĕтесри куракансем. Ушкăнăн тав хучĕсен пухмачĕ хулăнлансах пырать.

Чунтан парăнса ĕçленин çимĕçĕ кăна çапла ăнăçлă пулаять. Маттурлăхĕшĕн Федоровсене тав сăмахĕ калас килет. Пур енĕпе те килĕшўллĕ мăшăр хăйсем юратакан ĕçпе ыттисене те хĕмлентерме пултарни чăннипех пархатарлă.

■ **Елена БЫРКИНА.**
Куславкка районĕ

● *"Сударушкăн" артисчĕсем.*

ЧУНРИ

Пĕччен йывăça çил те шеллемест

Чўречерен пăхса мĕншĕн йĕрет кинемей?

Пурнăç йĕрки çапла: хуйха-савăнăça кампа та пулин пайламалла, чуна тăвăрлатакан, ăша çунтаракан, пуçа ыраттаракан шухăша уçса парса ăнланупа çăмăллăх шырамалла, йывăрлăхра пулăшу ыйтмалла. Апла тăк пире ăнланакан çывăх çын кирлĕ. Кам-ши çав çын? Паллах, тăван.

Турра шĕкĕр: эпĕ тăвансенчен пуян. Эппин, туратсăр йывăç мар. Тĕрлĕ çĕрте пурăнаканскерсемпе çыхăну тытсах тăратăп, пĕр-пĕрин патне хăнана çўретпĕр, аттеаннепе тĕл пулса савăнатăп. Çывăх çынсем пире мĕн ачаран ĕçе юратма вĕрентеççĕ, пĕр-пĕринпе туслă пулма ăс параççĕ. Тăвансем пуçтарăнсан каласмалли те, шўтлемелли те, савăнмалли те тупăнать. Туслăх, тăванлăх ăшши хăнасем кайсан та нумайччен упранать. Пирĕн умĕн çак çĕр çинче мăн асаттесемпе асаннесем, вĕсен йышлă тăванĕ пурăннă. Йăха малалла тăсма пĕр ăру теприне пиллесе пынă.

Несĕлĕмĕрсем пĕр-пĕринпе хутшăнса пурăнассине малти вырăна хунă. Вун-вун тĕрлĕ йăла-йĕрке, уяв туса ирттернĕ, вĕсене ламран-лама вĕрентсе пынă. Ача çуралнине хăйĕн йĕркипе паллă тунă, туй кĕрлеттернĕ, салтак ăсатнă. Мăн кун çитсен пĕр ратнерисем пĕр-пĕрин патне эрнипех хăнана çўренĕ, выльăх пуссан шўрпе çиме чĕннĕ, ĕне пăруласан ĕне ырри пĕрле ас тивнĕ. Тăванлăх тымарĕ ан татăлтăр тесе тăтăш тĕл пулма тăрăшнă.

Пирĕн пурин те телейлĕ пурăнас килет. Чуна килĕшекен ĕç, юратнă мăшăр юнашар пулсан, тăвансемпе тачă çыхăну тытсан, юлташсем пулăшса пырсан – çын телейлĕ. Юрату, ăнлану чун-чĕрене çунат хушать, мĕн пур йывăрлăха çĕнтерме вăй-хал парать.

Пурнăç пурнăçах: вăл вĕрсе хăпартнă хăмпă мар, унта тăрăнмалли кĕтессем те тĕл пулкалаççĕ. Хальхи саманара тăвансен çыхăнăвĕсем татăлнине час-часах асăрхама пулать. Харкам хăй çинчен çеç шухăшлать хăшĕ-пĕри. Ытла та мăн кăмăлланса кайрăмăр. Пиччĕшĕ – шăллĕпе, ывăл-хĕрĕ ашшĕ-амăшĕпе йĕркеллĕ пурăнайман, ашшĕ-амăшĕ тăван ачине килтен хăваланă тĕслĕхсен шучĕ ўсет. Япăх арăм е путсĕр кĕрў упăшки-арăмне хăйĕн чи çывăх çыннисемпе – ашшĕ-амăшĕпе – хирĕçтерсе яни те йăлана кĕрсе пырать. Инкек сиксе тухсан е чир-чĕре пула йывăрлансах çитсен тăванĕсем патнеллех туртăнать-ха çын. Анчах та сивĕннĕ чуна тепĕр хут ăшăтма каснă чĕлле тепĕр хут çыпăçтарасси пекех йывăр.

Чунра чул йăтса çўреме те çăмăл мар. Вăхăтра – каçару ыйтма, кўреннĕ çыннăн каçарма пĕлмелле. Пире пурне те ырă кăмăл, ăшă сăмах, ачашлăх кирлĕ. Тепĕр чухне çывăх çын аллине хул пуççи çине хуни те мĕн тери паха.

Пĕр ватă, пĕччен пурăнакан кинемей, каланă сăмахсем аса килчĕç: "Кашни уява кўршĕсем патне тăванĕсем йышлăн пуçтарăнаççĕ, ман патăма вара Çимĕкре те никам килекен çук. Чўречерен сăнаса ларатăп та – куçăм шывланать, чун хурланать. Ватлăхра пĕччен тăрса юлнинчен хăрушши çук иккен. Пĕччен йывăça çил те ытларах тустарать". Вăхăтĕнче унăн çемйи пулнă: ывăлĕ те, кинĕ те, мăнукĕсем те. Хăех аркатнă йăвана, кайран вара... кая юлнă.

Чăваш юррисем пире тăванлăх тĕпре пулмаллине аса илтерсех тăраççĕ: "Пире тăван кĕтсе тăрать, пўрт алăкне уçса хурать...", "Ай-хай ырă тăвансем, килсех тăрăр, ан сивĕнĕр", "Куртăм-куртăм тăвансене, курса тăранаймарăм..." тата ытти те. Кăмăла çĕклентерекен хитре сăмахсем тупса юрăç тăванлăха мухтать, унпа савăнать, пурне те çавăн пек пулма хистет. Ачалăх тĕнчи, атте-анне килĕ яланах пулăшса, хăват кўрсе тăни çинчен уççăнах систерет.

Тĕрекпе шанчăклăх утравĕ пулмалла-çке этемĕн. "Мана манса кайрăр-шим", – тесе хурланса юрламалла ан пултăрччĕ никамăн та. Çитĕнсе çунат сарнă кашни çын, пурнăç çулĕ таçта илсе çитерсен те, тăван кĕтесе ан мантăрччĕ. Хăйĕн ĕçĕсемпе, хăтланăвĕпе ашшĕ-амăшне, тăванĕсене, тус-юлташне намăс кўресрен асăрхантăрччĕ. Юрăри пек "ваттисен пиллĕхне асра тытса ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле пурăнар, пĕр-пĕрне юратса ал парар та ыр сунар". Ырă сунсан – ырри килетех.

■ **Светлана КУЛАКОВА.**
Патăрьел районĕ,
Чăваш Ишек

ПĔЧĔККИСЕМ ПУПЛЕÇÇĔ

"Упăте мар эпĕ!"

Çуллахи çумăр ача-пăчашăн – савăнăç. Вăл иртсе кайсан урамра сывлăш еплерех уçă! Пўртре епле чăтса ларăн? Пĕр касри "вĕтĕсемпе" пĕрле Славик те выляма тухрĕ. Самантранах алли-ури, кĕпи-йĕмĕ пылчăкланчĕ.

Амăшĕ çакна асăрхасанах ывăлне килне илсе кĕресшĕн пулчĕ. Пĕчĕкскер тусĕсенчен уйрăлас килменрен – турткалашрĕ, йĕрмĕшме те тытăнчĕ. Амăшĕ вăйпах килĕ еннелле уттарчĕ.

– Эх, упăте тĕк упăте вĕтха эсĕ! Çакăн пек вараланма пулать-и вара? Сан пек таса марри никам çук, – ятларĕ ывăлне.

– Çук, упăте мар эпĕ, – куççуль витĕр тухрĕç Славикăн сăмахĕсем. – Упăте макăрма пĕлмест.

Кăларăма Ирина ИВАНОВА хатĕрленĕ.

Никита ЛАРИОНОВ

Сенкер çулăм тата юрату

Калав

/Малалли. Пуçламăшĕ 172-мĕш номерте/.

Кăштахран, пĕр çирĕм минутран-и, çур сехетрен-и, хайхи арçын хапха уçса тухрĕ те мотоциклне тапратса кайрĕ. Гаражра ĕçлет-ши, машинине юсава лартнă шофер-ши? Тепĕртакран тухрĕ чиперкке. Ну, шашару патăм вара эп ăна. Ну, тăнлантартăм. Эсир кану çуртĕнче паллашрăр та халь ман упăшкапа тăтăш тĕл пулатăр, иртнĕ эрнере те килсе кайрĕ сан пата Ишĕм терĕм. Хăна çуртĕнче, хăвăр пĕлĕшсем патĕнче, вăрманта тĕл пулса савăшатăр терĕм. Упăшкуна калатăп тетĕп. Çырăвне кăтартрăм эп ăна, аллине тыттамарăм. Тунаймасть çын – хăйĕн почеркне, хăй çырнине паллать. Чĕнмест, кăшт-кашт мăкмак тукалать пĕрлĕхен пек хĕрелсе кайнăскер. Корреспондента илсе килсе хаçата çыртарса кăларттаратăп, паянах редакцие кĕретĕп, эсĕ икĕ çемьене аркатса аскăнса пурăнасшăн тетĕп. Макăрса ячĕ хĕрарăм. Манран вун-вун ик çул çамрăкскер пуль. Çапла сивĕтрĕм эпĕ ку хĕрарăма Ишĕмрен. Исайчĕ кун хыççăн канлĕхе çухатрĕ. Шупашкара командировкăна тесе кайса килчĕ, ытти чухнехилле мар тем ĕç тухман пек мăртăхса çÿрет. Сăмах та хушмасть килте.

Аскăн арçын аскăн хĕрарăма татах тупать. Тĕрĕсех калаççĕ кун пирки ватăсем: кĕрт амипе кĕрт açине патакпа хăмсарса чаймастăр. Каларĕç-ха мана, систерчĕç: Ишĕм хăйсен патĕнче ĕçлекен Евкенпе ерсе пурăнать терĕç. Ах, курасчĕ сан Евкене, мĕнлескер вăл! Купарчине тăлт-тăлт сиктерсе утаканскер, куçне йăлт-йăлт вылятаканскер.Темле чурăс арçын пуçне те çавăрса ярĕ. Пăру кăкарма каяс йÿтĕмпе килĕ тĕлĕнчен иртсе çÿретĕп. Упăшки пур. Сÿнтĕкскер. Ик ача. Пÿртре урай та упăшки сĕрет, кĕпе-йĕм ухать. Арăмăн хăйĕн илемне упрамалла тет çав сÿнтĕк. Ĕçкĕ-çикĕре хăйĕн сăмси айĕнченех çаклатса каяççĕ арăмне. Евкенĕ вара тепĕр тăранманнипе ыр пулсан йăлкăшса кĕрет, ларать кĕрекере упăшкипе юнашар. Ташланипе пăчă пулчĕ те аранах тухса уçăлтăм, пахчара сывлăш лайăх текелесе, ихиклетсе. Ĕçке-çике хамăр питех хутшăнман, кÿршĕсем калаççĕ, хăлхана кĕрет. Ишĕме ертнĕ çав ясар. Ишĕм вилсе каять уншăн.

Исай час-часах хурала юлать цех кантурне. Евкен те – пĕрле. Патне кайса çÿремен эп, таçта цехĕ, таçта тресчĕ – пĕлместĕп. Çава тухрăмăр. Курорта каймасăр чăтаять-и-ха терĕм. Ак вĕренме чĕнеççĕ, курса каймалла тесе пуçтарăнать. Ăçта çул тытассине шарламарĕ, ик эрнерен таврăнатăп терĕ. Мана мĕн? Пĕччен тăрса юлма хăнăхнă эпĕ. Хĕрĕм патне кайса килнĕччĕ. Пурăнать вăл, ĕçлет хулара. Систерчĕç мана, каларĕç: «Евкен путевкăпа Атăл леш енне канма кайрĕ, виç кунтанах ун хыççăн Ишĕм вĕçтерчĕ», – терĕç.

Çитсе курам терĕм: чăн-и сăмахĕ? Мĕн хăтланаççĕ кусем?

Шупашкартан Атăл леш енне кăнтăр иртсен каçрăм. Пыратăп ăшă çу кунĕнче кану çуртнелле. Çумăр пулĕ тесе плащ илнĕччĕ. Ăна хуçлатса тытнă, пĕчĕк сумка пур. Кантура кĕрсе кусем хăш çуртра, хăш пÿлĕме вырнаçнине пĕлме ĕмĕтленетĕп. Хăйăрлă сукмакпа иртрĕм сăрт урлă. Дача евĕр йывăç çуртсем лараççĕ ретретĕн шăкăрин. Çакăнта курах кайрăм: мана хирĕç Евкен киле парать; асăрхарĕ те мана – сукмака урлă аллея пур, çавăнталла пăрăнса йăшт анчах вăшкăнчĕ. Тăратăп пăхкаласа. Утрăм малалла. Пĕр çурт тĕлĕнчен иртрĕм, тепĕр çурт тĕлĕнче ак ман Ишĕм тăрать. Куçне-пуçне чарса пăрахрĕ. Курма килтĕм сана, канас пулсан пĕрле канăпăр, мĕншĕн уйрăммăн çÿремелле терĕм çакна. «Ăм-м», – текелерĕ Исай. Пĕр путевкăпа иккĕн канакансем пур-ха тесе сăмах тупрĕ. Ку путевкине тухса килеспе çунса каять тесе тыттарчĕç тет. «Тыттар мана, тыттар, – тетĕп. – Еркĕнÿ халь хирĕçех пулчĕ. Ăна ăçта хурăпăр», – тетĕп. «Евкене калатăни? Вăл хăй тĕллĕн килнĕ, эп хам. Ăна пĕлместĕп, – павра пуçларĕ Ишĕм. – Атя палатăна кĕрсе кур, кантура кайăпăр. Путевкăна тÿлесе илме пулĕ», – текелет. «Санпа савăшса çÿреме килтĕм çав эп, килти вылăх-чĕрлĕхе пăхма çынна хушса хăварса, – тетĕп. – Куртăм сана. Тытрăм пĕрлине. Халь хăйăр çине хĕртĕнме пĕрле тухса выртма хатĕрленетĕр-и-ха? Кĕççе пит, намăссăр». Мана çапĕччĕ те вăл, хĕнĕччĕ те – çынсем тăраççĕ, пĕрле канаканĕсем пур.

Киле ĕрĕхтерсе çитрĕ тепĕр ик кунтанах. «Ман ята яран! Арçын питне хупласа çÿрен!» – тесе кÿлешет. «Мĕн, тĕрĕс марăи? Евкенÿпе тытрăм сана. Мана суйса пурăнатăн. Алхасас пулсан кай еркĕнÿпе, килсе ан кĕр киле», – терĕм. Тулхăрса пычĕ ман пата, ярса илчĕ. Тытăçса ÿкрĕмĕр. Мĕн, эп – хĕрарăм, вăл – арçын. Урайĕнче тĕрмешетпĕр. Пăвса лартрĕ мана... Тунмастăп, вĕлеретех терĕм. Тÿррине тÿррипех калатăп: кĕпейĕм лапăртанса кайрĕ ман. Шăм-шак темле лăш пулчĕ. Пыра пăвнă, чун тухатех терĕм. Ишĕм сăмсине те ирсĕр шăршă пырса çапрĕ пулмалла – аллине ярса тăрса утрĕ...

Елена Ефимовна каласа панине çакăнпа вĕçлем. Ăçта кайтăр ĕнтĕ хĕрарăм ялта? Мĕнех тăвайтăр вăл пĕччен? Вутти-шанкине те хатĕрлемелле, киле-çурта та пăхмалла...

Ку калава мана чунĕ кÿтнĕ çын хĕл пуçламăшĕнче каласа панăччĕ. Ак çава тухсан эпир, вĕрентекенсем, шкул валли хатĕрленĕ вутта илме вăрмана кайрăмăр. Икĕ кун текмеçлентĕмĕр. Исай Исайч та пулчĕ пирĕнпе. Арăмĕ вырăнне пынă вăл. Хул пуççипе йăтрăмăр пуленккесене чăнкă çырмасенчен автомашина е трактор кĕрсе тухмалли вырăнсем тĕлнелле. Пурнăç тапхăрĕн вăхăчĕ ку – çĕн йĕркелÿ. Хаçатсенче влаçсен иртнĕ çулĕсенчи ултавлă ĕçĕсем çинчен час-часах çырма пуçларĕç те, пирĕншĕн эпир халĕччен пĕлменни уçăла-уçăла пычĕ, вара хамăр сисмесĕрех кашни тенешкел политикăпа кăсăкланса кайрăмăр. «Литература хаçатĕнчи» унашкал сумлă статьясене шкула илсе кайса кăтартаттăм. Парса яр-ха, Исай Исайча вулаттарам тетчĕ Елена Ефимовна; хăй урăх хаçатсенчи статьясене касса килсе тыттаратчĕ, анчах эпĕ унашкаллисем еннелле пăхма пăрахрăм: вĕсем маншăн кăнттамччĕ, тарăннăн тишкерни, ултавăн, путсĕрлĕхĕн сăлтавĕсем мĕнрен килнине палăртни çукчĕ вĕсенче; çынна çини, тепĕр майлă каласан, элек шайĕнчеччĕ; литераторсен кăларăмĕнчи статьясенех тĕш апат пек çăтатăп эпĕ. Ку иртнĕ хĕл хăйсен хушшинчи хирĕçĕве пула Елена Ефимовна упăшки валли статья тавраш илсе кайни пулмарĕ. Анчах çын вăл çынах, малтан мĕнпе кăсăкланнă, çавăн енне хăпăлхапăлах ал сулмасть. Ак, вут каскисене йăтнă хыççăн каннă самантсенче, апат вăхăчĕсенче Исай Исаевич чĕлхи çинче – политика. Хăш пуçлăх хăш вырăнта чух мĕнле вăрттăн ĕçсем тунă, халăхшăн халь мĕн паллă пулса тăнă – çавна ăнлантарать, хăй мĕн вуласа пĕлнине калать. Сăмаха çын ĕненмелле çыпăçтарма пĕлет вăл. Пĕр хушă теприне тăнлама та пултарать.

/Малалли пулать/.

Шупашкар 2014

Олимп çулĕ такăр мар

Пирĕн ентеш Валериан Соколов Чăваш Ен атлечĕсенчен чи малтан Олимп вăйăисен чемпионĕн ятне çĕнсе илнĕ

Çурла уйăхĕн вĕçĕнче чăваш атлечĕ Ардалион Игнатьев Швейцари тĕп хулинче иртнĕ Европа чемпионатĕнче 200 метра чупассипе – иккĕмĕш, 400 метрлă дистанцире пĕрремĕш вырăн йышăннăранпа 60 çул çитрĕ. Чăваш Республикинчи физкультурăпа спорт историйĕн аталанăвĕнче çак паха пулăм паллă вырăн йышăнать. Иртнĕ ĕмĕрĕн 1950-мĕш çулĕсенче СССР спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕн, Елчĕк районĕн хисеплĕ çыннин А.В.Игнатьевăн тĕслĕхĕ чăвашсем ĕçре е çăпăçу хирĕнче кăна мар, спортра та пысăк çитĕнÿсем тума пултарассине уççăн кăтартса панă.

● Олимп вăйăисен чемпионĕсем В.Соколовпа С.Чиркова 1968 çулта Мехикăран таврăнсан.

Ардалион Игнатьев спринтерпа пĕрле Мельбурнти XVI Олимп вăйăисенче Куславккара 1932 çулта çут тĕнчене килнĕ Борис Столяров та ăмăртнă. Атăлăн сылтăм çыранĕ хĕрринчи пысăках мар хулара вырăс ачи вăрах пурăнман, 30-мĕш çулсен варринче вĕсен çемйи Чул хулара тĕпленнĕ. Куславккара Борис Васильевичăн çывăх тăванĕсем паян та пурăнаççĕ. Вĕсенчен пĕри – 1966-1975 çулсенче 2-мĕш вăтам шкул директорĕнче, унтан çирĕм çула яхăн Куславкка район ĕçтăвком председателĕн çумĕнче вăй хунă хисеплĕ шур сухал Рудольф Константинович Малинин. Вăл каласа панă тăрăх – унăн иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕ Горький хулинчи вăтам шкулта вĕреннĕ чухне тăршшĕне сикессипе тата кĕске дистанцисенче яшсен тата юниорсен ушкăнĕсенче облаç чемпионĕ ятне темиçе хут çĕнсе илнĕ. 1951 çулта Б.Столяров вăтам шкула пĕтернĕ те пĕр училищĕре вĕренме пуçланă, çав çулсенче пушă вăхăтра тăтăшах хулари спорт комитечĕ çумĕнчи ăсталăха ÿстерекен çăмăл атлетсен ятарлă шкулне çÿренĕ. Тепĕр çулхинех Атăлçи çар округĕнче хĕсметре пулнă 20 çулти каччă 110 метра чăрмавсем урлă чупассипе çитĕннисен хушшинче Горький облаçĕн чемпионĕ ятне çĕнсе илнĕ. Борисăн спортри ăсталăхĕ Ленинградри П.Ф.Лесгафт ячĕллĕ патшалăх физкультура институтĕнче вĕреннĕ çулсенче уйрăмах ÿснĕ. Çак аслă шкулта вăл пирĕн мухтавлă ентешпе Ардалион Игнатьевпа пĕрле вĕреннĕ.

60 çул ытларах каялла çăмăл атлетика енĕпе Киевра иртнĕ СССР чемпионатĕнче Ардалион Игнатьев 400 метра 46,1 çеккунтра вĕçлесе çĕр-шыв рекордне лайăхлатнă. Унăн тусĕ, 22 çулти Борис Столяров çав кунхинех 110 метрлă дистанце барьерсем урлă чупассипе лайăх кăтартупа палăрнă – 14,5 çеккунт. СССР тата Украина чемпионне Евгений Буланчика пурĕ те 0,2 çеккунт выляса ярса виççĕмĕш вырăн йышăннă, спорт мастерĕн нормативне пурнăçланă. Тепĕр çулхине Куславккара çуралса ÿснĕ Б.Столяров Украин каччине çур утăм выляса ярса СССР чемпионачĕн кĕмĕл медальне çĕнсе илнĕ. XVI Олимп вăйăисен çулталăкĕнчи çĕр-шывăн чи яваплă чемпионатĕнче Столяровпа Буланчик пĕр пек вăхăт кăтартнă. Тепĕр икĕ уйăхран Мельбурнти ăмăртăва кайма кам путевка çĕнсе илнине тимлĕ судьясем татса панă – СССР чемпионачĕн хĕрлĕ хăйăвне чи малтан Борисăн кăкăрĕ çине çакнă.

1956 çулта Австралире иртнĕ Олимпиадăра Совет Союзĕн 283 спортсменĕ ăмăртнă. Вĕсенчен иккĕшĕ – Ардалион Игнатьевпа Борис Столяров – Чăваш Енре çуралса ÿснĕ. Маларах пĕлтертĕмĕр ĕнтĕ: чăвашсен пирвайхи олимпиецĕ, Елчĕк районĕнчи спринтер 400 метра виççĕмĕш вĕçлесе Олимп вăйăисен бронза медальне тивĕçнĕ. 24-ри Столяров та Мельбурнта лайăх ăмăртнă: малтанхи чупура дистанце 14,3 çеккунтра вĕçлесе /СССР рекорчĕ/ виççĕмĕш вырăн йышăннă, çурма финалта иккĕмĕш пулнă, чи татăклă чупура вара – улттăмĕш.

Куславккан хисеплĕ çынни Р.Малинин пире пĕлтернĕ тăрăх – олимпиец тăван хулине юлашки хут 1970 çулсен пуçламăшĕнче хăнана килнĕ. Рудольф Константинович тăрăшнипе ун чухне 2-мĕш вăтам шкулта Б.Столярова халалласа спорт уявĕ йĕркеленĕ. Юлашки вăхăтра Борис Васильевич Мускав облаçĕнчи Подольск хулинче пурăннă.

1960 çулсенче пирĕн республикăра ял хуçалăхĕпе экономика вăй илет, халăх пурнăçĕ палăрмаллах лайăхланать. Çур ĕмĕр каялла Чăваш Ен массăллă спорта малалла аталантарас тĕлĕшпе те пысăк çитĕнÿсем тăвать. 50-мĕш çулсенче республикăра пурĕ те пилĕк спорт шкулĕ ĕçленĕ пулсан çитес вунă çуллăхра вара хула-районсенче ачасемпе çамрăксен 13 спорт шкулĕ уçăлнă. Чăваш патшалăх педагогика тата ял хуçалăх институчĕсенче, Шупашкарти электроаппаратура заводĕнче "Энергия", пир-авăр комбинатĕнче "Текстильщик", В.И.Чапаев ячĕллĕ производство пĕрлешĕвĕнче "Волга", агрегат заводĕнче "Сталь" тата Канашри вакунсем юсакан заводра "Локомотив" спорт клубĕсем ĕçлеме пуçланă. Ăста спортсменсем хатĕрлес ĕçре вĕсем пĕр-пĕринпе тупăшни чăваш атлечĕсене Европа тата тĕнче шайне çĕкленме çителĕклĕ услови туса панă. Нумай-нумай çĕр-шывра А.В-.Игнатьев олимпиецсăр пуçне ытти чăваш спортсменĕсене те паллама пуçланă. Пархатарлă çак ĕçре, паллах, Совет Союзĕнчи виççĕмĕш космонавт, пирĕн мухтавлă ентеш, СССР спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ А.Г.Николаев вышкайсăр пысăк тÿпе хывнă. 1960 çулччен пирĕн республикăра пурĕ те пилĕк спорт мастерĕ хатĕрленĕ тĕк çитес вунă çуллăхра вара СССР спорт мастерĕн нормативне чăвашăн 99 атлечĕ пурнăçланă. Вĕсенчен çиччĕшĕ – Канаш районĕнче çуралса ÿснĕ парашютистка Мая Костина, Шупашкарти Геннадий Кузнецовпа Иван Дьяченко чушкăлла выляканнисем /городки/, Георгий Николаев пистолетран тĕл перекен, Маргарита Мальстрем /Козлова/, Аполинария Владимирова тата Канаш хулинчи Дина Григорьева /Скворцова/ йĕлтĕрçĕсем "СССР хисеплĕ спорт мастерĕ" ята тивĕçнĕ. Вĕсем пурте, çавăн пекех И.Я.Яковлев ячĕллĕ педагогика институтчĕн преподавателĕ Аркадий Улангин, Элĕк районĕнче çуралса ÿснĕ Василий Семеновпа Никита Ларионов, Канаш хулинчи Юлия Зайцева /Кудряшова/, Вăрнар поселокĕнчи Маиса Кондрашкина, Шупашкарти тĕрлĕ вĕренÿ заведенийĕсен преподавателĕсем Виталий Ивановпа Борис Михайлов /пурте çăмăл атлетика енĕпе/, ял хуçалăх институчĕн студенчĕ Валериан Соколовпа Валерий Уледеркин /бокс/, Вăрнар районĕнчи Айкăш ялĕнчен тухнă Виктор Андреев штангист, Шупашкарти Владимир Сергиевский шахматист, Орест Маркияновпа Илья Уркин кĕрешекенсем, Канашри Владимир Воронковпа Мария Воронина йĕлтĕрçĕсем тата ытти каччăпа хĕр СССР чемпионачĕсенче тата Пĕтĕм Раççейри тĕрлĕ турнирта çĕнтерсе ылтăн медальсене тивĕçнĕ.

● Олимп чемпионĕ Валерий Ярды.

45 çул ытларах каялла Чăваш Ен чапне Вăрмар районĕнчи Пинер ялĕнче çуралса ÿснĕ, Чăваш патшалăх ял хуçалăх институчĕн механизаци факультетне пĕтернĕ Валериан Соколов пуринчен те ытларах çĕкленĕ. Вăл – тĕнчипе чапа тухнă спортсмен, чăваш боксерĕсен шкулĕн пирвайхи чĕкеçĕ.

1968 çулхи кĕркунне варри. Инçетри Мехикăра уçăлнă XIX Олимп вăйăисенче Совет Союзĕн чысне 313 спортсмен хÿтĕленĕ. Вĕсенчен виççĕшĕ – пирĕн ентеш: Валериан Соколов, Чăваш педагогика институчĕн студенчĕ, Çĕмĕрле районĕнчи Пĕренеш ялĕнчи Валерий Ярды велосипедист тата Çĕрпÿ районĕнче çуралнă, ачаранпах Эстонире пурăнакан Светлана Чиркова фехтовальщица.

Шупашкарти "Динамо" спорт çуртĕнче Геннадий Герасимов пултаруллă тренер ертсе пынипе ăсталăх пухнă, 22 çулти СССР чемпионĕ В.Соколов Мексикăн тĕп хулинче те çухалса кайман. Малтанхи тĕл пулусенче Валериан Эквадорти Рафаэль Ангуидианăна 3:2 шутпа çĕнтернĕ, Аслă Британи боксерне Майкл Картера пĕрремĕш раундрах нокдауна янă. Çурма финалта чăваш каччине хирĕç Ази чемпионĕ Эйдзи Мариока тухнă. Çапăçу виçĕ раунда тăсăлнă, анчах самурай йăхĕнчен тухнă японец вĕçне çитичченех çапăçнă, совет боксерĕ ăнсăртран такăнасса чăтаймасăр кĕтнĕ. Çак тĕл пулу чăваш каччи 5:0 шутпа çĕнтернипе вĕçленнĕ. Чи татăклă тĕл пулура Валериан Уганда боксерĕпе Эридади Мукванг негрпа тупăшать. Ун чухне залри пин-пин çын – вĕсенчен ытларахăшĕ хура ÿтлĕ çынсем пулнă – тĕреклĕ те чăрсăр африканец çĕнтерессе шаннă та, кĕтнĕ те. Анчах та СССР тава тивĕçлĕ тренерĕн Г.Н.Герасимовăн вĕренекенĕ рингра парăнман. Юлашки тĕл пулура Валериан Соколов Уганда боксерне икĕ хутчен нокдауна ярать те рефери тÿрех хĕрсе кайнă çивĕч çапăçава чарма сигнал парать. Çапла майпа Чăваш Енĕн атлечĕ пирĕн ентешсенчен чи малтан Олимп вăйăисен чемпионĕн ятне çĕнсе илет.



● Куславккара çуралса ÿснĕ пирĕн ентеш, Олимпиадăна хутшăннă Борис Столяров.

1970 çулсенче те, каярахпа та мана В.С.Соколовпа темиçе хут тĕл пулма тивнĕ: Шупашкарта кăна мар, Мускавра, Хусанта, Вăрмар поселокĕнче, тăван ялĕнче тата ытти çĕрте. Вăл Олимп чемпионĕ кăна мар, педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Совет Çарĕн полковникĕ. 80-90-мĕш çулсенче çĕр-шыври Хĕç-пăшаллă вăйсен спорт клубĕн аслă тренерĕнче ĕçленĕ май чылай çул çамрăк боксерсене вĕрентрĕ, вĕсене пысăк ăмăртусене хатĕрлерĕ. Çулталăк каялла Пинерте хута кайнă икĕ хутлă капăр çĕнĕ шкул çурчĕ В.С.Соколов ячĕпе хисепленет. Шупашкарти Олимп резервĕсен спорт шкулне мухтавлă чемпион ятне панăранпа вунă çул иртрĕ.

Маларах палăртрăмăр ĕнтĕ: XIX Олимп вăйăисенче Валерий Ярдыпа Светлана Чиркова та ăмăртнă. Вĕсем иккĕшĕ те Совет Союзĕн чысне 1972 çулта Мюнхенра иртнĕ XX Олимп вăйăисенче те ăнăçлă хÿтĕленĕ. Германири шĕкĕр хулара, çавăн пекех 1970 çулсенче тĕнчери пысăк çитĕнÿсем тунă мухтавлă ентешсем çинчен хаçатăн çитес кăларăмĕсенче çырса кăтартăпăр.

■ **Петр СИДОРОВ.**

Юрий ПЛОТНИКОВПА автор архивĕнчи сăн ÿкерчĕксем

РЕКЛАМА ПĔЛТЕРÜ

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru

Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пÿлĕм

Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

Саламлатпăр



Канаш районĕнчи Атнашра çуралса ÿснĕ, халĕ Шупашкарта пурăнакан Иван Егорович ИЛЬИНА çуралнă кун ячĕпе хĕрÿллĕн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу сунатпăр.

Николай Касьянов, Валентин Григорьев, Юрий Михайлов.

Администрация Красночетайского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве собственности из категории "земли сельскохозяйственного назначения":

- с кадастровым № 21:15:080101:168, местоположение: Чувашская Республика, Красночетайский район, Пандиковское сельское поселение, для сельскохозяйственного производства, площадью 5500 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429040, село Красные Четаи, пл. Победы, дом 1 (здание администрации), кабинет №306 с 8-00 до 17-00 час. Ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок 2-13-55.

ПРОДАЮ

4.Пластиковые ОКНА. Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка - бесплатно. Т. 89875766562.

8.Гравмассу, песок, щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 89051990122.

12.Профнастил, металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, **металлосайдинг.** Т. 444433.

19.Гравмассу, песок, **керамзит, бой** кирпича. Т. 89033225766.

61.Блоки керамзитобетонные от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

75. Дымоходные трубы из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

172.Гравмассу, керамблок, **песок,** щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

178.Гравмассу, песок, цемент. Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 89278497674.

323.Песок карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, **бетон,** раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

372.Песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, **керамзит.** Доставка. Т.: 8-960-308-08-54, 8-917-066-04-80.

341.Гравмассу, песок, щебень. Доставка. Т. 89030666630.

570.Щебень, песок, гравмассу, навоз, торф, чернозем. **Доставка.** Услуги самосвала – 15 тн. Т. 8-987-669-29-41.

Администрация Алатырского района 10 октября 2014 года в 11 час.00 мин. по московскому времени в помещении администрации Алатырского района по адресу: г. Алатырь, ул. Горшенина, 7, каб. 6 проводит открытый аукцион по продаже земельного участка, предоставленного для сельскохозяйственного производства не имеющих обременений и ограничений его использования из земель сельскохозяйственного назначения:

Лот № 1 – земельный участок с кадастровым номером 21:06:000000:1529, площадью 31000 кв.м, местоположение: Республика Чувашская, район Алатырский, Новоайбесинское сельское поселение. Начальная цена 9000 руб., сумма задатка 1800 руб. 00 коп., шаг аукциона 5 процентов.

Заявки на участие в аукционе принимаются в каб. 6 администрации Алатырского района по адресу: ЧР, г. Алатырь, ул. Горшенина, 7 с 8.00 до 17.00 в рабочие дни не позднее окончательного срока приема заявок **6 октября 2014 года** совместно с платежным документом, подтверждающим оплату задатка. Победителем признается лицо, предложившее наиболее высокую цену по торгам, с которым в пятидневный срок заключается договор купли-продажи. По вопросам проведения аукциона, оформления заявок и перечисления задатков обращаться в каб. № 6 администрации Алатырского района или ознакомиться на сайте www.torgi.gov.ru.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ тата Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕ Чăваш АССР юстици министрĕн çумĕ /1981-1986/, Чăваш Республикин Аслă сучĕн председателĕ /1986-2004/

Петр Фадеевич ЮРКИН

вилнĕ пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

чăваш халăх хаçачĕ

ХЫПАР

Золотой фонд прессы Чувашии

Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ

Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ

РЕДКОЛЛЕГИ:

М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
Г.А.МАКСИМОВ /директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/

Дежурнăй редактор А.В.СЕРГЕЕВА

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев просекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".

ТЕЛЕФОНСЕМ

Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренÿ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерÿсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

hypar2008@rambler.ru

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

Çĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРÜСЕНЕ 316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Çç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Номере 08.09.2014 алă пуснă.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 7393. Заказ 3380.